Килти хушма хуçалăх

Йăлтах ĕçленине кура

Килти хушма хуçалăха аталантарасси халăх хушшинчи ĕçсĕрлĕхе чакарассипе те, ял хуçалăх продукцийĕн рынокне пуянлатассипе те çыхăннă. Çавăнпа та ял хуçалăхĕнчи çак ене çул уçасси çине Раççей Федерацийĕн тата Чăваш Республикин Президенчĕсемпе Правительствисем те пысăк тимлĕх уйăраççĕ. Ял çыннисем килти хушма хуçалăха аталантарассипе кредитсем нумай илни те хресчен хăйне аталанма туса панă çул-йĕрпе туллин усă курма тăрăшнине çирĕплетет.

УМСĂМАХ

Кăçалхи пуш уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне районти килти хушма хуçалăхсенче çынсем пурĕ 10932 пуç ĕне-выльăх тытнă. Çав вăхăтрах майăкаллă шултра выльăхсен район территорийĕнчи кĕтĕвĕ пĕтĕмпе 16353 пуçпа танлашать. Килти хушма хуçалăхсенче тытнă майăкаллă шултра выльăхсенчен 7497 пуçĕ – сумалли ĕнесем (районĕпе пурĕ 9653 пуç ĕне). Çыснасем усрас ĕçре пысăкрах тўпе пĕрлешўллĕ хуçалăхсем çине ўкет. Районти пур харпăрлăх формиллĕ хуçалăхсенче те тытакан пĕтĕмшле 11676 пуç çыснаран 2192 пуçĕ çеç ял çыннисен килти хушма хуçалăхĕсенче вырăн тупнă.

Килти хушма хуçалăхсем вăй илсе пынине ял çыннисем сурăхсемпе чăх-чĕп тытассипе те мал туртăмлă ĕçленинчен асăрхама пулать. Районĕпе çак уйăх пуçланнă тĕле 10815 пуç сурăх пулнă пулсан, 10497 пуçĕ килти хушма хуçалăхра шутланнă. Çавăн пекех ял çыннисен килти хушма хуçалăхĕсенче 50 пин пуçа яхăн чăхчĕп пулни те (пур категорисене те илсен 319,5 пин пуç) ял çыннисем алă усмасăр ĕçлени пирки калать. Ĕçлекенĕн продуктивлăх та пулать. Çапла вара районти килти хушма хуçалăхсенче кăçалхи кăрлач-нарăс уйăхĕсенче чĕрĕ виçепе 557 тонна аш-какай, 5688,7 тонна сĕт, 1181,1 пин штук çăмарта туса илнĕ. Каласа хăварманнипе, районта пĕтĕмĕшле туса илекен аш-какайăн 70,3 проценчĕ, сĕтĕн 80 проценчĕ – килти хушма хуçалăхăн тўпи.

ÇЫН ÇИНЕ ШАНМАН

Эсир сăн ўкерчĕкре куракан çамрăк хĕрарăм – Галина Николаевна Александрова – килти хушма хуçалăха аталантарассипе çанă тавăрса ĕçлекенсенчен пĕри. Паянхи ĕçе ырана хăварманнипе, хăй пурнăçламалли ĕçе ыттисем çине йăвантарманнипе, çĕнĕлĕхсене алла илессипе ыттисенчен ытларах тăрăшнипе тата хăйĕн çемйине питĕ юратнипе палăрса тăрать çак хĕрарăм. Унăн каласăвĕнче те малти вырăнта ĕç тата çемье.

– Эпир çамрăк-ха, анчах ĕçпе çемьене уйрăммăн курмастăп эпĕ. Маншăн вĕсем пĕр çыхăра. Çавăнпах иртнĕ çул Муркаш енри килти хушма хуçалăхсем хушшинче ирттернĕ экономика ăмăртăвĕнче те мала тухма пултартăмăр пулас. Кунта мăшăрăмăн – Шетмĕпуç ял тăрăхĕн пуçлăхĕн Николай Поликарповичăн – тата 7-мĕш класра вĕренекен хĕрĕмпе 5-мĕш класра пĕлў пухакан ывăлăмăн тўпи те пурах ĕнтĕ. Вĕсене тата ытти çывăх тăванăмăрсемпе кўршĕ-аршăна пысăк тав йывăрлăхсенче пĕччен хăварманшăн тата ĕçре куллен пулăшнăшăн, – терĕ килти хушма хуçалăха тытса пыма кам пулăшать тесе ыйтсан, сцена çинчен район пуçлăхĕнчен 1-мĕш степеньлĕ диплом илсе аннă Галина Николаевна çĕнтерўçĕ сăн-питре ĕç савăнăçне пытармасăр.

1975 çулта Елчĕк районĕнче çуралса ўснĕ хĕр шкул хыççăн Çĕрпўри çĕвĕçсем хатĕрлекен училищĕне ăнăçлă вĕренсе пĕтерет. Автанкасси каччипе паллашнă Елчĕк хĕрĕ кĕçех – 1995 çулта – Муркаш ене кацча килет. Ялта çĕвĕç специальнăçĕпе ĕç пулманран тата çĕр ĕçĕнчен нихăçан та хăраман мăшăр пĕр шутласа тăмасăрах килти хушма хуçалăха аталантарас çула суйласа илет.

Унтанпа чылай вăхăт иртрĕ ĕнтĕ. Паян тăрăшуллă мăшăр харпăрлăхĕнче 7 гектара яхăн çĕр. Ун çинче вĕсем пĕлтĕр 2 гектар майлă лаптăк çинче çĕр улми туса илнĕ, ытти çинче курăк ўстернĕ. Галина Николаевна шухăшĕпе кăçал «иккĕмĕш çăкăр» лаптăкне ўстерес плансем пур.

– Уй-хиртен продукци илмесĕр выльăх-чĕрлĕх ĕрчетесси пирки ан та шутла. Кĕлетсемпе ампарсем тулли пулнăран эпир 4 ĕне, тынашкасем, çыснасем, сурăхсем усратпăр. Çу кунĕсенче чăхчĕпне те, хур-кăвакалне те ытлă-çитлех тытатпăр. Иртен пуçласа каçчен килти хушма хуçалăхра вăй хурса туса илнĕ сĕтне те, тăпăрчине те, аш-пăшĕпе çăмартине те пасарта сутатпăр, – кăмăллăн калаçать кил хуçи хĕрарăмĕ.

Çын çине шанмасан, хăв вăйна курса-пĕлсе тăрсан умри сăрт-тăва та тепĕр майлă çавăрса лартма пулать-мĕн. Çакна Галина Николаевна Александровапа калаçнинчен тепĕр хут ăнланса илтĕм.

Анатолий БЕЛОВ.

Автор сăн ўкерчĕкĕ.

Выльăх-чĕрлĕх отраслĕн аталанăвĕнче

Ўсĕмсен çулĕпех утаççĕ кунта

«Свобода» хуçалăхра ăратлă выльăхпа ĕçлесси вуншар çул пыракан ĕç. Малашлăха пăхса вăй хунă атте-асаттесем 1963 çултах хуçалăхра ăратлă выльăх ферми тытма пуçланă. 1977 çулхи августăн 29-мĕшĕнче унăн никĕсĕ çинче çыснасемпе ĕçлеме ăратлă завод статусне илнĕ. Çĕршывăмăрăн йывăр экономика лару-тăрăвĕнче те кунта ăратлăх ĕçне хăй еккипе яман. Маларах кунсенчен пуçласан, 1992 çулхи августăн 6-7-мĕшĕсенче Киров хулинче ирттернĕ Раççейри ăратлă çыснасен выставка-ярмăрккинче ăратлă завод 1-мĕш степеньлĕ аттестата тивĕçнĕ. 1999 çулта ăратлă выльăх ĕрчетнĕ çĕрти чи сумлă кăтартусемшĕн Пĕтĕм Раççейре ирттернĕ смотр-конкурсра хуçалăх пысăк шурă ăратăра чемпионсемпе рекордистсем ўстернĕшĕн çĕнтерўçĕ аттестатне илнĕ. Ăратлăх ĕçĕ нихăш çул та уксахламаннине 2001 çулта ăратлăх завочĕ Пĕтĕм Раççейри чи лайăх кăтартусемшĕн ирттернĕ смотр-конкурсра Хисеп дипломĕллĕ пулни те уçăмлă калать.

Çахал выльăхпа ытларах продукци илме çук. Çакна асра тытса выльăх кĕтĕвне май пур таран ўстерсех пыма тăрăшаççĕ кунта. Акă 2009 çулта хуçалăхра çыснасем 1658 пуç пулнă пулсан, паян вĕсем 34 пуç ытларах. Ўсĕмлĕ ĕçлеме фермăра ĕç вăйĕ çителĕклĕ. Кунта 4-мĕш çул Кашмашри çысна фермин коллективне ертсе пыракан Виталий Васильевич Никитин **(пĕрремĕш сăн ўкерчĕкре)** тăтăшах шыравра пулни палăрать. Çĕнĕ технологипе ĕçлеме ĕçе кĕртнĕ çĕнĕ сарай паян çысна пăхакансене те ĕç çине çĕнĕлле пăхтарать.

Икĕ ача çуратса ўстернĕ Елена Захаровна Тихомирова **(иккĕмĕш сăн ўкерчĕкре)** 2000-мĕш çултанпа «Свобода» хуçалăхăн Кашмашри çысна ферминче амасем пăхнă çĕрте ĕçлет. 29 ама тата 5 çысна аçи пăхакан хĕрарăм иртнĕ çул пурĕ 803 çысна çури илме пултарчĕ. «Ўсĕмлĕрех ĕçлеме майсем пур. Çавăнпа та ку кăтартăва ўстерес тĕллевсемпе çĕнĕ çула кĕтĕм», – тĕллевĕсемпе паллаштарать «2009 çулта çысна çурисем илессин чи лайăх операторĕ» ята илнĕ Елена Захаровна. Вăл пĕлтĕр çулталăк хушшинче çурасем илессине 34 процент ўстернĕ, кашни тĕп çысна аминчен 22 çура тата тĕрĕслемелли кашни çысна аминчен 9,7 çура илсе пĕтĕмĕшле кăтартăва çўллĕ шая çитерме пултарнă. Сăмах май, ферма ĕçченĕсен пĕрлехи тўпи те сулăмлă. Вĕсем иртнĕ çул пурĕ 3927 çура, кашни 100 тĕп çысна ами пуçне 1713 çура илсе, çыснасене талăксерен вăтамран 405 грамм ўт хуштарса аш туса илессине 114,7 тоннăна çитерсе районти экономика ăмăртăвĕнче ырă ята тивĕçнĕ. Район администрацийĕн пуçлăхĕн Ю. Ивановăн нарăс уйăхĕн 8-мĕшĕнчи «Районта 2009 çулта выльăх-чĕрлĕх отраслĕнче ĕçлекенсем хушшинче ирттернĕ экономика ăмăртăвĕн кăтартăвĕсем çинчен» йышăнăвĕпе Муркаш район администрацийĕпе агропромышленность комплексĕнче ĕçлекенсен профсоюз райкомĕ çирĕплетнĕ 1-мĕш степеньлĕ диплома тата куçса çўрекен «Чи лайăх çысна ферми -2009» вымпелпа 5 пин

тенкĕ укçан парнене ăратлă выльăх ĕрчетессипе специализациленекен «Свобода» ял хуçалăх производство кооперативĕн Кашмашри çысна фермине панă.

Тунă ўсĕмрен Кашмашсем кăçал та пăрăнасшăн мар. «Утăмсене малалла тăвассишĕн, хуçалăх экономикине тĕреклетессишĕн çеç ĕçе тухатпăр эпир. Ĕç условийĕсем ырă малашлăха шанса вăй хума пулăшаççĕ», – теççĕ вĕсем. Хуçалăх кăçалхи икĕ уйăхра çыснасенчен продукци илессине пĕлтĕрхи çав вăхăтринчен 151 процент ўстернĕ. Çак тапхăрта районĕпе 1412 çура илнĕ пулсан, 628-шĕ – Кашмашсен тўпи.

Малашлăха пăхса ĕçлекенсем ыттисене те хавхалану кўрсен тем пекехчĕ.

А. ПЕТРОВ.
Автор сăн ўкерчĕкĕсем.

Гражданла оборона тата чрезвычайлă лару-тăру

Çурхи шыв-шур килет

Асăрхану çут çанталăкăн кирек хăш вăхăтĕнче те кирлĕ. Акă çывхаракан çуркунне те кăçал юр нумай çунине тата çĕр тарăн шăннине кура таврара шыв-шур илес хăрушлăх кăларса тăратать. Çак тапхăра маларахах тĕплĕн хатĕрленмесен шыв-шур умĕнче çын вăйсăр. Çуркуннене кура çак тапхăрти тĕрлĕ процессем те юхăнтарупа та ишĕлтерўпе çыннăн пурнăç условийĕсене самантрах начарлатма пултараççĕ. Кăçал районти пур объектăн та çурхи шыв-шуртан инкек тўсес хăрушлăх пур. Ку ыйтупа иккĕленекенсем пысăк йăнăш тăваççĕ. Иртнĕ хĕл кунĕсем ытти çулхисенчен палăрмаллах хаяр пулчĕç: юр суман тапхăрта çĕр тарăн шăнчĕ – 1,5 метр, январь-февраль уйăхĕсенче юр нумай çуни çуркунне шыв чылай пуласса систерет.

Паян пуш уйăхĕн 20-мĕшĕ. Хĕл кунĕсем хыçа юлсах пыраççĕ. Апла пулсан çурхи шыв-шур та çывăхарах та çывăхарах. Хатĕр-и-ха эпир ăна кĕтсе илме?

Çурхи шыв-шура аварисемсĕр ирттерсе ярас тĕллевпе район администрацийĕн пуçлăхĕ ятарлă йышăнупа комисси йышне çирĕплетрĕ. Çавăн пек комиссисене ял тăрăхĕсенче те йĕркеленĕ. Вырăнсенчен пĕлтернĕ тăрăх, çурхи шыв-шурпа кĕрешме ĕç планĕсем хатĕр. Анчах юр ирĕлме пуçланă май хăрушлăх ўссех пырать. Çавăнпа та вырăнсенче:

– гидротехника сооруженийĕсене, шывпа газ тата электричествăпа ăшă системисене, çулсемпе кĕперсене кая юлмасăр тепĕр хут тĕрĕслесе тухмалла;

– çивиттисем çинчи юра, пăрланнă шыв тумламĕсене тасатмалла;

– минераллă удобренисемпе наркăмăшлă химикатсем тата сĕрмелли-çунтармалли материалсем упранакан складсем, выльăх çăвисем таврашĕнче шыв кайнине сăнасах тăмалла;

– шыв-шур тапхăрне валли выльăхсене çителĕклĕ апат-çимĕç кўрсе хумалла;

– халăха ĕçмелли паха шывпа тивĕçтересси çине тимлĕх уйăрмалла;

– аварисен хăрушлăхĕ сиксе тухсан ун пирки кая юлмасăр 01, 02, 03, 04 номерсемпе шăнкăравласа пĕлтермелле;

– пушар хăрушсăрлăхĕпе тивĕçлĕ йышăнусем тумалла;

– çурхи пăр çине кĕрсе каясран асăрханмалла.

Ялсенче пурăнакансем нумайăшĕ нўхрепсемпе усă кураççĕ. Унта шыв кĕнине асăрхаса юлайманни те – пысăк хăрушлăх. Çавăнпа та ял çыннисен çывăхри çăлсенче шыв хăпарнине асăрхаса нўхрепсене хăрушлăхран çăлса хăварма тăрăшмалла.

Пуш уйăхĕн 18-мĕшĕнче çурхи шыв-шура йĕркеллĕ ирттерсе ярас тĕллевпе йĕркеленĕ комиссин черетлĕ ларăвĕ иртрĕ. Унта Ярапайкасси, Катькас, Уйкас Янасал ял тăрăхĕсенче çурхи шыв-шура епле ирттерсе яма хатĕрленнине пăхса тухрăмăр.

Н. МИЛЮТИН,
район администрацийĕн гражданла оборона тата чрезвычайлă лару-тăру секторĕн ертўçи.

Ыйту-хурав

Премикс

Çуркунне еннелле сулăнтăмăр пулин те, хĕл кунĕсем иртсе кайиччен вăхăт самайха. Паян ĕнесен сывлăхне упраса хăварас тесен вĕсене мĕнле витаминсем памаллаши? Çакăн пирки хаçат страницисенче çырса кăтартсан аван пулмаллаччĕ.

И. СОЛОВЬЕВ.

Хаçат вулавçин ыйтăвне тивĕçтерме выльăх чирĕсемпе кĕрешекен районти станцире вырнаçнă ветеринари аптекине çул тытрăмăр. И. Соловьев ыйтăвĕ çине аптека заведующийĕ Ольга ПРОХОРОВА çапла хурав пачĕ:

– Ялта пурăнакан çĕршер çынна хумхантаракан ыйту ку. Хĕл кунĕсем вĕçленсе пыраççĕ, анчах çава тухиччен вăхăт çапах чылай пулнăран выльăхсем паян вĕсене паракан апатра витаминсем çителĕксĕррипе аптăрама пуçлаççĕ. Çак вăхăт тĕлне типĕтнĕ утăра та выльăхсене çителĕклĕ чухлĕ витаминпа минераллă япаласем упранса юлаймаççĕ ĕнтĕ. Çавăнпа та ку çитменлĕхе пĕтерме çуркунне енне выльăхсене витаминпа тата минераллă хутăшсемпе пуянлатнă апатсемпе апатлантармалла. Кунта вара ял çыннисене, выльăхсен хуçисене премикс препарат пулăшать. Витаминпа, минералсемпе пуянлатнă премикс ĕнесем валли те, çыснасем валли те пур. Вĕсене пирĕн патра кирек хăçан та туянма пулать.

Паян ĕнесен пăруламалли тапхăрĕ малалла пырать. Пăрусем лайăх виçепе çуралчăр тесен, вĕсене ĕне хырăмлăхĕнчех çителĕклĕ аталанма выльăхсене пура (мел) çитермелле. Ĕнене çителĕклĕ сĕт хатĕрлеме тата пăрава вăй парса пыма кунсерен 100-150 грамм кальци кирлĕ. Ăна кашни кун хушса памасан ĕне остеопарос чирĕпе чирлес хăрушлăх пур. Иммунитет хавшанă выльăха ытти чир-чĕрсем те çыпçăнма пултараççĕ. Тырă-пулăра кăна кальци çителĕксĕр пулнăран остеопарос чирĕпе çыснасем те чирлеççĕ. Кун пек чухне чип-чипер ўт хушса çитĕнекен çыснасем урасăр пулаççĕ, çурасем час çитĕнмеççĕ. Çакна пĕлсе тăрса вĕсене хĕллехи вăхăтра премикс парсах тăмалла.

Премикс туянас текенсем выльăх чирĕсемпе кĕрешекен районти станцире вырнаçнă ветеринари аптекине пыма е унпа 62-5-13 номерлĕ телефонпа çыхăнма пултараççĕ.